ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ХУЛА СТРОИТЕЛЬСТВИН ЕҪ-ХӖЛӖ ЕНӖПЕ ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИСЕНЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ УЙРĂМ ПӖРЛӖХӖСЕН ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНӖСЕМ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ВЛАÇӖН ОРГАНӖСЕМ ХУШШИНЧЕ ÇӖНӖРЕН ПАЙЛАССИ ÇИНЧЕН" САККУНӖН 1 ТАТА 2 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КӖРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 57 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2024, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьяра "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин тата Шупашкар хулин" сăмахсене "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хули хула округĕн тата Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас;

2) 2 статьян 1 пайĕнче "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хулин тата Шупашкар хулин" сăмахсене "Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар ху-

ли хула округĕн тата Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
95 №